28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
25
КĔÇНЕРНИКУН
207 (6958) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

КАШНИ СОВЕТ ГРАЖДАНИНĔН СУЙЛАВ ЗАКОННЕ ПĔЛМЕЛЛЕ

Халĕ ĕнтĕ суйлав законне пичетлесе кăларнă. Ăна вĕреннĕ май совет çыннисем ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Советне мĕнле суйланине аса илеççĕ. Иртнĕ суйлавсенче совет халăхĕ хăйĕн пĕрлĕхне, вăл Ленин—Сталин партийĕпе Тăван çĕршыва мĕн тери юратнине кăтартса пачĕ. Иртнĕ суйлавсенче суйлавçăсем большевиксен партийĕшĕн, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăларĕç. Вĕсем хăйсен кунçулне Ленин—Сталин партийĕн аллине шанса пачĕç. Большевиксен партийĕ пирĕн халăха ертсе пыракан, ăна çул кăтартса пыракан вăй пулса тăрать. Тĕнчери пĕр парти те халăх хушшинче пирĕн большевиксен партийĕ пек авторитетлă пулман, пулас та çук. Çавăнпа та ĕнтĕ суйлавçăсем хăйсен сассисене коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн пачĕç.

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕ пирĕн Тăван çĕршыва, пирĕн паттăр халăха тивĕçлĕ пулчĕ. Урăхла пулма та пултарайман. Мĕншĕн тесен совет çыннисем унта чи лайăххисенчен те лайăхраххисене, халăх интересĕшĕн, социализмлă Тăван çĕршывăн интересĕшĕн пурне те тума хатĕррине кăтартса панă çынсене суйласа ячĕç. Халăх суйласа лартнă çынсем хăйсене шанса панă ĕçе тӳрре кăларчĕç. Йывăр тĕрĕслев вăхăтĕнче вĕсем иккĕленсе тăмарĕç, совет халăхĕн чи пирвайхи депутачĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, вĕсем пирĕн государствăна пысăк йывăрлăхсем витĕр илсе тухрĕç.

Вăрçă вăл кашни халăхăн мĕнпур вăйĕсене пур енчен те тĕрĕслесе тухать, тесе кăтартса панă Ленин. Отечественнăй вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе пĕтни ĕнтĕ Ленинăн çак сăмахĕн тĕрĕслĕхне питĕ лайăх çирĕплетсе хăварчĕ. «Вăрçă урокĕсем çакăн çинчен калаççĕ,—тенĕ Сталин юлташ:—совет стройĕ çĕршыва мирлĕ строительство çулĕсенче экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕклес ĕçе организацилемелли чи лайăх форма кăна мар, тата вăрçă вăхăтĕнче тăшмана хирĕç тăма халăхăн мĕнпур вăйĕсене мобилизацилемелли чи лайăх форма пулса тăчĕ».

Октябрьти революци туса хунă социализмлă строй пирĕн халăхпа пирĕн Хĕрлĕ Çара никам çĕнтерейми аслă вăй пачĕ. Хамăрăн Тăван çĕршыва хӳтĕлес, Октябрьти аслă революцире çĕнтерсе илнисене хӳтĕлес идейăсем пирĕн Хĕрлĕ Çара тĕреклетрĕç, фронтра та, тылра та геройсем çуратрĕç. Совет халăхĕ хăйĕн историллĕ миссине—тĕнчери халăхсене ирĕке кăларас миссие чыслăн пурнăçа кĕртсе, тĕнче цивилизацине нимĕçсен фашистла аркатуçисенчен çăлса хăварчĕ. Çакă ĕнтĕ совет халăхĕн этемлĕх историне кĕрсе юлма тивĕçлĕ ĕçĕ пулса тăрать.

СССР Верховный Совечĕн депутачĕсем хăйсен ĕçĕнче аслă Ленинран пример илчĕç, аслă Сталин кăтартса панă çулпа ĕçлесе пычĕç. Вĕсем çапăçура, Ленин пекех, хăрама пĕлмерĕç, Ленинпа Сталин пекех, тĕрĕслĕхе, халăха юратса ĕçлерĕç.

Халĕ ĕнтĕ мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ. Сталин юлташ пĕтĕм совет халăхĕ умне вăрçă кӳрсе хăварнă сурансене хăвăртрах тӳрлетсе çитерес, хамăрăн совет государствин вăй-хăватне татах та ытларах тĕреклетес задача лартрĕ. Кашни совет çынни халĕ хамăрăн çĕршыва экономикăпа вăрçă тĕлĕшĕнчен татах та хăватлăрах тăвас тесе тăрăшса ĕçлет.

Совет гражданĕсем халĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе хамăрăн Тăван çĕршыва социализм патне малалла ăнăçлăн илсе пыма пултаракан çынсене государствăн аслă органне суйласа ярасси çинчен шутлаççĕ. Хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçу хирĕсенче хăйсен вăйĕпе пурнăçне шеллемесĕр кĕрешнĕ, тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ çынсене халăх пĕлет. Паллах ĕнтĕ, çав чи лайăххисенчен те лайăхраххисене СССР Верховный Совет депутатне суйлама кандидата тăратĕç.

СССР Верховный Советне суйламалли кампани пуçланнă май, партипе совет органĕсем умне çав тери пысăк задача тухса тăрать: кашни çыннах «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» тĕплĕн ăнлантарса парса, ăна хăйне тивĕç суйлав правипе туллин усă курма майсем туса парас пулать. Ку ĕç халĕ пирĕн республикăра пуçланчĕ. Вăрнар районĕнчи ялсенче кашни пилĕк килĕре пĕр агитатор суйлав законне ăнлантарса парать. Ытти районсемпе хуласенчен те ĕçсыннисене суйлав законĕпе паллаштарма тытăнни çинчен хыпарсем килеççĕ. Ĕçсыннисене суйлав законне вĕрентес ĕçе Шупашкар хулинче ăнăçсăртарах пуçларĕç. ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕ агитколлектив руководителĕсем валли инструкциллĕ калаçу ирттернĕ, анчах та çак калаçу пуласси çинчен чылай организацисене пĕлтермен.

Суйлав çинчен халĕ пур çĕрте те—предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче, ĕçсыннисен хваттерĕсенче ăнлантару ĕçне анлăн туса пымалла. Парти организацийĕсен çак ĕçе тума чи пултаруллă та хастарлă агитаторсене уйăрмалла, вĕсем хăйсен çулăмлă сăмахĕсемпе ялта—государство умĕнчи обязательствăсене кĕске вăхăтрах тултарассишĕн, предприятире—производство планне тултарассишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма, ĕçсыннисен политикăллă ăнланулăхне татах та çӳлерех çĕклеме пултарччăр.

Парти организацийĕсем иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнче пухнă опытпа усă курма пĕлни ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан условисенчен пĕри пулса тăрать. Парти организацийĕсен кунта çакна та шута илмелле: иртнĕ суйлавсем хыççăнхи вăхăт хушшинче совет çыннисем вăрçăн йывăр тĕрĕслевĕ витĕр тухса, аслă Çĕнтерӳ туса, политика тĕлĕшĕнчен чылай çитĕнчĕç, обществăллă пурнăçа активлăн хутшăнма пуçларĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ парти организацийĕсен ăнлантару ĕçне тунă вăхăтра халăх ыйтусене тĕплĕнрех те тарăнрах çутатса пама ыйтнине асра тытмалла.

Агитаторсен, пропагандистсен, хаçатсен суйлав законĕн политикăллă пĕлтерĕшне кашни çынна тĕплĕн ăнлантарса памалла, суйлав Положенийĕн кашни статьипе паллашма пулăшмалла. Суйлавçăсен списокне кĕртмелли, çав списокпа паллашмалли, суйлавçăсен списокне тунă хыççăн вырăнтан куçса каякан çыннăн «Сасăлама ирĕк паракан удостоверени» илмелли, суйлавçăсен списокĕнчи тĕрĕсмарлăха тӳрлеттерессии çинчен заявлени памалли йĕркесене çĕршыври çитĕнсе çитнĕ кашни гражданинăн çирĕп пĕлсе тăмалла. ССР Союзĕн Сталинла аслă Конституцийĕн положенийĕсене ăнлантарса парасси, совет гражданинĕн прависемпе обязанноçĕсене ăнлантарса парасси—пропагандистпа агитаторăн пархатарлă тивĕçĕ пулса тăрать.

«СССР Верховный Советне суйламалли Положение» çакăн пек тĕплĕн те тарăннăн вĕрентни граждансене хăйсен суйлав прависемпе туллин усă курма май парать, суйлав вăхăтĕнче кашни суйлавçă хăйĕн тивĕçне тĕрĕс пурнăçа кĕртĕ тесе шанса тăма май парать.

Уява пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн

КАНАШ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан завод коллективĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă уява ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленет. Халĕ ку тĕлĕшпе заводри пур цехсенче те рабочисем нихçан пулман хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Заводри куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава алра тытса тăракан вагон рессорĕсем тăвакан цех (начальникĕ Козлов юлташ) вагон рессорĕсемпе пружинăсем туса кăларас тĕлĕшпе çулталăкри плана октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлнех тултарчĕ. Цех октябрь уйăхĕнчи плана та: рессорсем туса кăларас тĕлĕшпе 105,9 процент, пружинăсем туса кăларас тĕлĕшпе 106,9 процент тултарчĕ. Ку цехри рессорщик Петров юлташ пуринчен те тухăçлăрах ĕçлет. Вăл çирĕм кун хушшинчи задание 313 процент тултарнă. Рессорщик Панченко юлташ тата прессовщик Вдовенко юлташ та хăйсен çирĕм кунри заданийĕсене 276—284 процента çити тултарчĕç.

Çавăн пекех ремонтно-утилизационный цех коллективĕ те уяв умĕнхи ăмăртура пысăк çĕкленӳпе ĕçлет. Цех вагон деталĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе çирĕм кунри плана 126,4 процент тултарчĕ. Ку цехри Рябинин, Тронин, Бадин стахановецсем çак юлашки кунсенче хăйсен заданийĕсене кулленех 300—350 процента çити тултарса ĕçлеççĕ. Механически цех коллективĕ те (начальникĕ Князев) ăмăртура малта пырать. Вăл çирĕм кунри задание 117,8 процент тултарчĕ.

Пур цехсен коллективĕсем те Октябрь уявне производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

„Красный яр" артелĕн ĕçĕ лайăхланса пырать

Етĕрне районĕнчи «Красный яр» промысла артелĕн ĕçĕ лайăхланнăçемĕн лайăхланса пырать. Артель кăçалхи плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма шутлать.

Артельри урапа çапакан 57 çулти И. Коречев кулленхи плана 140-шер процент тултарса пырать, çав вăхăтрах вăл 4 хĕрачана урапа çапма вĕрентнĕ. Вăл вĕрентсе кăларнă О. Моисеева, Е. Авдеева, В. Львова тата Ф. Арифеева юлташсем халĕ кулленхи нормăна 120-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Моисеева юлташ, хăй вĕренсе тухнă хыççăн, 11 çамрăка урапа çапма вĕрентет. 58 çулти мастер Гаврилов çуна тунă çĕрте кулленхи нормăна 130-шар процент тултарса пырать.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ОКТЯБРĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

МТС-сем	Тракторпа ĕçленĕ	Авăн çапнă
1. Вăрнар	163,3	124,9
2. Шăхасан	142,5	48,1
3. Куславкка	140,6	54,1
4. Йĕпреç	130,3	67,7
5. Вăрмар	125,3	115,3
6. Красноармейски	125,1	60,9
7. Канаш	124,3	50,2
8. Çĕрпӳ	123,5	59,5
9. Ишлей	123,0	36,3
10. Елчĕк	120,6	56,6
11. Чкаловски	117,2	94,0
12. Калинино	113,0	71,0
13. Комсомольски	110,9	51,7
14. Первомайски	102,6	43,0
15. Улатăр	101,2	64,1
16. Шупашкар	100,9	40,0
17. Сĕнтĕр	96,5	19,6
18. Элĕк	95,7	61,7
19. Тăвай	94,3	35,5
20. Сурмайдан	94,1	57,2
21. Сĕнтĕрвăрри	90,1	21,7
22. Çĕмĕрле	89,2	32,6
23. Етĕрне	87,4	45,0
24. Октябрьски	87,0	10,1
25. Хĕрлĕ Чутай	84,2	14,5
26. Кувакино	77,0	48,9
27. Сиява	75,4	57,0
28. Шăмăршă	74,8	22,9
29. Пăрачкав	67,7	58,7

Çĕрулми кăларса пĕтерес ĕçе пĕтĕм вăя мобилизацилемелле

КӲКЕÇ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 101 колхозран 30 колхоз государствăна тырă парса татнă. Çĕрулми парса татнă колхозсен шучĕ те кашни кунах йышлăланса пырать. Анчах та «Трудовик», «Большая Волга» тата ытти колхозсенче те кăларса пĕтермен çĕрулми пур. Паянхи куна пĕтĕм çĕрулмин 10 процентне яхăн кăларман. Уйрăмах «Актив», «Урожай», «Кормилец», «11 лет Октября», Ильич ячĕпе тăракан колхозсем юлса пыраççĕ. Çĕрулмине паян-ыранах кăларса пĕтерес тесе, колхозсенчи пĕтĕм вăя мобилизацилемелле.

Г. ПЕТРОВ.

ХĂЙĔН ĔНИПЕ ЛАЙĂХ ĔÇЛЕКЕН КОЛХОЗНИК

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Красный воин» колхоз членĕ 65 çулти С. Николаев кăçал тырпул пухса кĕртес ĕçре хăйĕн ĕнипе ăнăçлă ĕçлерĕ. Вăл капан хывас ĕçре кăна 75 ĕçкунĕ тунă, 100 лав ытла кĕлте турттарнă. Хăйĕн бригади капана хывса пĕтернĕ хыççăн, юлса пыракан ытти бригадăсене кĕлте турттарма пулăшнă.

И. ГРИГОРЬЕВ.

ШКУЛ АЧИСЕМПЕ СЛУЖАЩИСЕМ КОЛХОЗСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ЭЛĔК, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем 59 гектар çĕрулми кăларса пĕтермен. Çанталăк сивĕтнине пула çак çĕрулмине кĕске вăхăтрах кăларса пĕтерес тесе, колхозри ĕçлеме пултаракан пур çынсене те мобилизациленĕ. Район центрĕнчи «Большевик» колхозăн 5 гектар кăларман çĕрулми пур. Çакна кăларса пуçтарма вăтам шкулти 300 ачана тата районри учрежденисенче ĕçлекен 30 служащие мобилизациленĕ. Унсăр пуçне районри учрежденисен лашисене те ĕçе явăçтарнă. Паян «Большевик» тата ытти колхозсенче те çĕрулми кăларса пĕтереççĕ.

Ф. КАТЕЕВ.

УЙĂХЛĂХ ЗАДАЧИСЕНЕ ĂНĂÇЛĂ ПУРНĂÇЛАТПĂР

Тăвай районĕнчи «Трудовой путь» колхоз членĕсем кăçал ăнса пулнă тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртрĕç. Колхозра 3 бригада, вĕсем яланах пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Ф. Никифоров юлташ ертсе пыракан бригада мала тухрĕ. Вăл государствăна тырă, çĕрулми парса татса тата авăн çапса пĕтерсе, ытти бригадăсене пулăшать. Колхоз тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татас тата авăн çапас ĕçе паян-ыран туса пĕтерет.

А. НИКОЛАЕВ.

Ӳкерчĕк çинче: Шăхасан МТС-ĕнчи 5-мĕш трактор бригадин бригадирĕ **Н. Александров** юлташ. Вăл тракторсемпе çулталăкра ĕçлемелли плана, авăн çапнисĕр пуçне, 125 процент тултарнă. 128 гектар вырăнне 300 гектара яхăн кĕрхи çĕртме тунă. Халĕ авăн çапмалли плана тултарассишĕн пикенсе ĕçлет. Унăн бригадинчи трактористсем тракторсем юсамалли плана срокчен тултарассишĕн ăмăртăва тухнă.

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртăва хутшăнса, районри колхозсем государствăна тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Паянхи кун тĕлне 54 колхоз государствăна тырă парса татнă. Çĕрулми парса татнă колхозсен шучĕ те кулленех йышлăланса пырать. Районĕпе 1.500 тонна çĕрулми памалла, хатĕрлев пункчĕсенчен пĕлтернĕ тăрăх, 1.400 тонна ытла çĕрулми панă. Чылай колхозсем государствăна планран ирттерсе çĕрулми параççĕ. «Янмурзино» колхоз 1.000 пăт, «Пахарь» колхоз 790 пăт, «Труженик» колхоз 610 пăт çĕрулми панă. Малта пыракан колхозсем çĕрулми памалли хăйсен обязательствине тултарнă хыççăн, тырă вырăнне планран ирттерсе 800 тоннăна яхăн çĕрулми панă.

Нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ. Ильич ячĕпе тăракан колхоз 480 пăт, «12 лет Октября» колхоз 1.037 пăт, «Шимар» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем кашниех 670 пăт пачĕç. Янкас ял Советне кĕрекен Чапаев ячĕпе тăракан колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 270 пăт тырă тата çавăн чухлех çĕрулми панă. Çак колхоз хăйĕн обязательствине лайăх пурнăçласа пырать. Кунта электричество вăйĕпе кăнтăрла та, çĕрле те пĕр чарăнмасăр авăн çапрĕç. Колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Паянхи кун тĕлне районĕпе пурĕ Хĕрлĕ Çар фондне 12.000 пăт ытла тырă панă.

Анчах районра юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Сталин ячĕпе тăракан колхозăн (председателĕ В. Андреева юлташ) государствăна тата 300 центнер ытла тырă памалла.

Сталин ячĕпе тăракан колхоза тата ун çывăхĕнчи ытти колхозсене государствăна тырă пама пулăшас тесе, вырăнтах хатĕрлев пункчĕ организациленĕ. Çак пунктра икĕ кун хушши пĕр чарăнмасăр тырă илчĕç. Ĕнер вара Заготзерно контори темĕнле сăлтавпа тырă илес тĕлĕшпе ĕçлекен çынсене, вăл шутра лаборантăна та, Михайловка станцине чĕнсе илнĕ те, икĕ кун хушши тырă илес ĕçе чарса лартнă.

Малта пыракан колхозсем юлса пыракан колхозсене государствăна тырă леçес тĕлĕшпе пулăшаççĕ. «Комбайн» колхоз «Большевик» колхозран 60 центнер, «Первое мая» колхоз «Автобус» колхозран 70 центнер тиесе Заготзерно пунктне леçнĕ.

Паян-ыран районри колхозсем государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене те парса татаççĕ. Халĕ пур колхозсенче те авăн çапса пĕтерессишĕн хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

Н. ГЛАДКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Совет çĕршывĕ тăрăх

ЗАВОД ÇУРТСЕМ ТУСА КĂЛАРАТЬ

Алапаевскри йывăç каскалакан комбинат çурт лартакан уйрăм çынсене валли пĕр хваттерлĕ çуртсем туса кăларма тытăннă. Халĕ 100 çурт туса кăларнă. Вĕсене Алапаевск хулине вырнаçтарса лартнă. Тата 56 çурт тума тытăннă.

(ТАСС).

М. А. ТИТЛОВ ЛЕТЧИК КАЛЛЕХ АРКТИКĂНА ТУХСА КАЙНĂ

М. А. Титлов летчик нумаях пулмасть Арктикăран вĕçсе таврăннă. Октябрĕн 20-мĕшĕнче вăл Мускавран каллех пăр разведкине Арктикăна вĕçсе тухса кайнă. Мускавран вăл Архангельска кайнă, унтан малалла Амдерма—Косистый мыс маршрутпа вĕçмелле. Хăйпе пĕрле Титлов летчик хаçатсем, журналсем, çырусем, тĕрлĕрен литература илнĕ. Главсевморпутĕн Политуправленийĕ Титловран Нордвикри шкулсемпе Кожевников бухтинчи шкулсем валли учебниксем парса янă. Унсăр пуçне Титлов летчик полярти станцисене тата Арктикăри авиапортсене кинофильмсем парса хăварать.

Ненец поселокĕнчи халăх валли вăл «Сталинградшăн çапăçни» тата «Кунсемпе çĕрсем» ятлă кинокартинăсем парса хăварать. Полярниксем валли ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи партин аслă шкулĕнче вуланă лекцисен стенограммисене тата парти строительствин ыйтăвĕсем тĕлĕшпе тĕрлĕрен материалсем янă.

Косистый мысĕнчен Титлов летчик Карск тинĕсĕпе Лаптевсен тинĕсне кайса пăр разведки тăвать. Çав разведкăн планне Пĕтĕм Союзри Арктика институчĕ туса хатĕрленĕ. Арктикăри тинĕссенчи пăрсем мĕнле куçса çӳренине çакăн пек вăхăтра сăнани малашне мĕнле çанталăк пуласине каласа парас ĕçре пысăк вырăн йышанса тăрать.

Титлов летчик нумаях пулмасть Арктикăра 20.000 километр вĕçнĕ самолетпах тухса кайнă. (ТАСС)



Каунасри «Кауно-Аудиняй» пир-авăр фабрикинче çĕнĕ йышши пурçăн тата ытти тĕрлĕ пир-авăр туса кăларма тытăннă.

Ӳкерчĕк çинче: фабрикăри набивка отделенийĕнче.

А. ФАТЕЕВ фотоӳкерчĕкĕ
(ТАСС фотохроники).

ЧУДЬ КӲЛЛИ ÇИНЧЕ ПАРОХОДСЕМ ÇӲРЕНИ

Чудь кӳллин пароходстви кăçалхи навигацие ăнăçлăн пĕтерет. Чудь тата Псков кӳллисем тăрăх, Нарва, Великая тата ытти юханшывсем тăрăх 60.000 тоннăна яхăн груз турттарса плана икĕ хут ытла тултарнă.

Нимĕç оккупанчĕсем чакнă чухне çак районри мĕнпур флота путарса хăварнă пулнă. Пароходство работникĕсем хăйсем тĕпрен çӳрекен 17 суднăна тата нумай баржăсене шывран кăларса юсаса ĕçе янă. Нумаях пулмасть пароходство пассажирсем çӳремелли виçĕ лини уçнă.

(ТАСС).

«ÇĔНТЕРӲ» ЙЫШШИ ÇĔНĔ ПАРОВОЗА ТĔРĔСЛЕÇÇĔ

Мускав çывăхĕнчи пĕр чугун çул çинче «Çĕнтерӳ» йышши çĕнĕ паровоза тĕрĕслеме тытăннă. Ăна Коломнăри завод туса кăларнă. Çак паровоз кирек епле чугун çул çинче те çӳреме пултарать. Вăл «СО» йышши паровозран 100—200 тонна ытларах груз турттарса çӳреме пултарать. Тăвалла вăл «ФД» йышши хăватлă паровозпа пĕртан хăвăртлăхпа хăпарма пултарать.

Çак паровозăн уйрăм пайĕсемпе деталĕсем ытти йышши паровозсенни пекех. Коломнăри завод çывăх вăхăтрах çавăн пек тепĕр паровоз туса кăларать.

КУЛИКОВ КАМЕНЩИКĂН РЕКОРЧĔ

Ленинградра тăшманăн авиабомби аркатнă çуртсене юсанă çĕрте Андрей Куликов каменщик пĕр сменăра 8.450 кирпĕч хурса нормăна 1.070 процент тултарнă. Тепĕр кунне Куликов татах çĕнĕ рекорд тунă. Вăл нормăна 1.180 процент тултарнă. (ТАСС).

8 ОФИЦЕР ЯЧĔПЕ ПАМЯТНИК ЛАРТНĂ

Запорожье облаçĕнчи Пологски районри Вербовки яле ирĕке кăларнă чухне Хĕрлĕ Çарăн 8 офицерĕ çапăçура вилнĕ. Вербовки ял Советĕнчи ĕçсыннисем вĕсен ячĕпе «Пятилетка» колхозра памятник лартнă. Памятника уçнă чухне вилнĕ командирсен çемйисене хăнана чĕннĕ.

(ТАСС).

ЛИТВАРИ ХАЛĂХ УНИВЕРСИТЕЧĔСЕМ

ВИЛЬНЮС, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Каунасри, Укремгари тата Мариампольри халăх университечĕсенче вĕрентме пуçланă. Паневежисра, Алитусра, Таурагере тата ытти уездсенче те тепĕр 10 халăх университечĕ уçăлать. Вĕсенче темиçе пин çын производствăра ĕçленĕ вăхăтрах вĕренмелле.

СУЙЛАВ ЗАКОННЕ КАШНИ РАБОЧИЕ ĂНЛАНТАРАР

Шупашкарти табак фабрикинче ĕçлекенсем «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» тимлĕн вĕренеççĕ. Фабрикăри пуçламĕш парторганизаци агитаторсем валли 10 экземпляр «Правда» хаçата çырăнса илет. Столовăйĕнче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» витрина туса çакнă.

Нумаях пулмасть кунта «Положение» ăнлантарса парас тĕлĕшпе фабрикăра ĕçлекенсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» гильзăсем тăвакан цехăн начальникĕ Р. Каргальская юлташ ăнлантарса пачĕ. «Положение» ăнлантарса парас тĕлĕшпе фабрикăра 8 агитатор ĕçлет, вĕсене кашнинех цехсем тăрăх çирĕплетнĕ. Халĕ агитаторсем рабочисене кашни кунах «Положение» ăнлантарса параççĕ.

Суйлав Положенине кружокра вĕренеççĕ

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Ырашпулăх ял Советĕнче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» вĕренес тĕлĕшпе ятарласа кружок организациленĕ. Кашни занятиех 20 çынран кая мар çӳрет. Кружока ĕçсынни депутачĕсен ял Совет исполкомĕн председателĕ Ильин юлташ ертсе пырать.

М. ОГОРОДНИКОВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Октябрĕн 24-мĕшĕнче кунта партин пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсемпе агитколлектив руководителĕсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта СССР Верховный Советне суйламалли Положение халăх хушшинче вĕренесси çинчен сӳтсе яврĕç.

СССР Верховный Совет суйлавĕ умĕн тухакан кĕнекесем

Чăваш АССР государство издательстви «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» çак кунсенчех вырăсла—5 пин экземпляр, чăвашла—20 пин экземпляр пичетлесе кăларнă.

Кунсăр пуçне, «Положение» листовкăсем туса пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ.

Çывăхри вăхăтрах тата çак кĕнекесене производствăна пама хатĕрлеççĕ: «Пĕтĕм Союзри Советсен 8-мĕш чрезвычайнăй съездĕнче Сталин юлташ СССР Конституцийĕн проекчĕ çинчен тунă доклада» тата «Сталин юлташ Сталински суйлав округĕнче тухса каланă сăмаха». Ку кĕнекесем чăвашла тухмалла.

ДЕПУТАТ СĂМАХĔ

Вĕри те çутă кăмăл хумĕ
Хаваслăн чĕрене тулать.
Паян эп, çĕнĕ суйлав умĕн,
Пăхса тухасшăн хам çула.

Ĕмĕтпе эп малалла та
Пăхатăп тинкерсе паян.
Çĕршывăмпа эп мухтанатăп,
Унпа эп чаплă та пуян.

Мана суйланă кун каларĕç,—
Çав пил вăл чĕрере тăрать:
Хăвна ӳстернĕ халăха эс
Ялан та Ленин пек юрат!

Хĕвел çуртне эпир тусаччĕ.
Тусаччĕ капăр керменсем.
Ункă çинче те гидростанци
Çутсаччĕ çутă çăлтăрсем.

Пĕр-пĕр тӳркес те сивĕ куçлă
Этем тăрсассăн çул çине,
Ăна сирсе, эпир çул уçнă,
Васкатнă хамăр ĕçсене.

Çанталăк хăш чухне тĕтреллĕ
Пулсан та, уçă пултăр çул.
Ленин пекех таса чĕреллĕ,
Тӳр шухăш-кăмăллă эс пул!

Тăшман сиксе ӳксен ултавлăн
Пирĕн хĕвеллĕ çĕр çине,
Мĕнпур тăвансемпе пĕр танăн
Эп тухрăм халăх вăрçине.

Хыçра выртать нумай пин сухрăм,
Эп хăрамарăм çулăмран.
Çарăмпала пĕрле эп утрăм
Мăн Атăлтан—Берлин таран.

Ялан та ман пĕр шухăш пулнă,
Çав шухăш нихăçан сӳнмен:
Ленин пекех эс пул хăюллă,
Пĕр тăшмана та ан хĕрхен!

Юнпа хаяр вут-çулăм урлă
Утса тухсассăн, ак татах
Пуçланчĕ лăпкă, çутă пурнăç,
Ĕçе чĕнет вăл, васкатать.

Çĕнĕ çынсем эпир суйлатпăр
Халăх ĕçне чунпа тума.
Татах пехиллесе калатпăр
Халь вĕсене те пĕр сăмах.

Вăл аслă Сталинăн сăмахĕ,
Вăл çăлтăр пек çунса тăрать:
Хăвна ӳстернĕ халăха эс
Ялан та Ленин пек юрат!

Аркадий ЕСХЕЛ

Ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн

Вăрçă çулĕсенче пирĕн районри кооперацине промысла артелĕсем тата вырăнти промышленность тĕрлĕрен таварсем туса кăларассине чылай ӳстерчĕç. Районри промышленность 1940 çулта тĕрлĕрен тавар 61,1 пин тенкĕлĕх. промысла кооперацийĕпе инвалидсен артелĕсем 227,5 пин тенкĕлĕх туса кăларнă пулсан, 1944 çулта вырăнти промышленность тĕрлĕрен таварсем туса кăларас енĕпе плана 525 процент, коопераци промышленноçĕ 223 процент таран тултарчĕç. Райпромкомбинат 1940 çулхипе танлаштарсан, 1944 çулта таварсем туса кăларассине 980 процент, 1943 çулхипе танлаштарсан 149 процент ӳстернĕ.

Çав вăхăтрах таварсем туса кăларассине ассортиментсем тăрăх пурнăçласа пырас ĕçе те лайăхлатрĕç. 1940 çулта райпромкомбинат урапа-çунасем пачах туман пулсан, 1944 çулта 130 стан урапа туса кăларнă, 1940 çулта мĕнпурĕ те 56 çуна çеç тунă пулсан, иртнĕ çулта 400 çуна туса кăларнă.

1940—41 çулсенче пирĕн артельсемпе промкомбинатра çăматăсем, тир-сăран, хăмăт-ĕнерчĕксем туман. Хальхи вăхăтра вăл таварсене хамăр районрах туса кăлараççĕ.

Анчах та районри промышленность хальхи вăхăтра куллен кирлĕ таварсене халăха тивĕçтермелĕх туса кăларать тесен, паллах, йăнăш пулнă пулĕччĕ.

Ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пырасси уйрăмăнах вырăнти промышленность предприятийĕсемпе артельсен тата апат-çимĕç комбиначĕн ĕçĕнчен нумай килет. Пирĕн районра пĕр промкомбинат, пĕр пищекомбинат тата виçĕ промысла артелĕ пур. Тавар туса кăларас енĕпе вырăнти промышленность предприятийĕсемпе артельсем начар мар ĕçлеççĕ пулин те, çĕнĕ таварсемпе изделисем çителĕклĕ туса кăларса пыраймаççĕ-ха. Тăхăр уйăхри производство планне вырăнти промышленность предприятийĕсем 74 процент, промысла артелĕсем 77 процент çеç тултарнă. Райпромкомбинат 9 уйăхри плана 93,4 процент, апат-çимĕç комбиначĕ 97,9 процент, «Сталь» промартель 75,1 процент, «Стахановец» промартель 73 процент çеç тултарнă.

Райпромкомбинат 14 тĕрлĕ тавар туса кăларас енĕпе 9 уйăхри производство планне тултарайман. Уйрăмăнах урапасем, çăматăсем, тимĕр-тăмăртан тĕрлĕ савăт-сапасем, тумтирсемпе атă-пушмаксем туса кăларас тĕлĕшпе начар ĕçленĕ. Промкомбинатăн планпа сентябрь уйăхĕнче 20 çуна, 20 стан урапа туса кăлармалла пулнă пулсан, вăл мĕнпурĕ те 5 çуна, 5 стан урапа çеç туса кăларнă.

Промкомбинат 20 тĕрлĕ тавар туса кăлармалла. Вĕсем пурте халăха кирлĕ таварсем пулса тăраççĕ. Сăмахран, планпа супăнь туса кăларма палăртнă пулнă, анчах та вăл ĕçе халĕ те организацилемен-ха. Тимĕр-тăмăртан савăт-сапасем тăвас тĕлĕшпе те плана 12 процент ытларах кăна тултарнă. Ку тĕлĕшпе ĕçлекен мастер Максимов сентябрь уйăхĕнчи плана 12 процент çеç пурнăçланă.

Шăхасанти «Сталь» промартель 9 уйăхри плана урана тăхăнмалли çĕнĕ япаласем туса кăларас енĕпе 25 процент, киввисене юсас тĕлĕшпе 35 процент, хăмăтсемпе ĕнерчĕксем туса кăларас енĕпе 40 процент çеç пурнăçланă. Ямашри «Стахановец» промартель плана çунасем тăвас енĕпе 12 процент, урапа кустăрмисем тăвас тĕлĕшпе 36 процент, çăпата туса хатĕрлес енĕпе 9 процент çеç тултарнă, кашăк-чашăксем тăвас ĕçе пачах та тытăнман.

Матьшӳри инвалидсен «Патрон» артелĕнче те çак çитменлĕхсенех курма пулать. Артель 9 уйăхри производство планне 112,1 процент тултарнă пулин те, ассортиментсем тăрăх илсе пăхсан, плана начар тултарса пырать.

Пирĕн вырăнти промышленность предприятийĕсемпе артельсен ĕçлеме условисем пур. Вĕсем производство планне уйăхран уйăхах тултарса пыма пултараççĕ. Чĕртаварпа ытти материалсем те çителĕклĕ. Кунта мĕнпурĕ те предприятисен ĕçне кирлĕ пек йĕркелени çеç çитмест. Туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатас, унăн хăйне ларакан хакне йӳнетес тĕлĕшпе промышленность предприятийĕсемпе артельсен руководителĕсем чăннипех тăрăшса ĕçлемеççĕ.

Ĕççыннисен заказĕсене вăхăтра пурнăçлас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Промкомбинатпа «Сталь» промартельре заказсем июльпе август уйăхĕсенчен вара выртаççĕ.

Ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас ĕçре суту-илӳ организацийĕсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Районри суту-илӳ организацийĕсем 9 уйăхри таварçаврăнăш планне 54 процент çеç тултарнă. Кипеч, Уйкас Кипек ялповĕсем плана 36—43 процент çеç пурнăçланă.

Отечественнăй вăрçă инваличĕсемпе фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕç лайăхланса пырать. 1945 çулхи 9 уйăх хушшинче фронтовиксен çемьисене 894 пин тенкĕ ытла пособи, 541 çемьене 350 пин тенкĕ пенси панă, 1497 хуçалăха 270 центнер тырă, 173 хуçалăха 5907 килограмм çĕрулми парса пулăшнă. Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе Сурăм, Энтриял, Атнаш, Ямаш ял Совечĕсенче аван ĕçлеççĕ. Сурăмри «Заря» колхоз кăçал фронтовиксен 19 çемьине 10 центнер тырă, Отечественнăй вăрçă инваличĕсене 5 çынна 2 центнер тырă, демобилизаци йĕркипе килнĕ 8 çынна 3 центнер тырă панă.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз 101 хуçалăха тата демобилизаципе килнĕ 12 çынна 70 центнер ытла тырă парса пулăшнă. Ухман ял Советĕнче фронтовиксен çемьисене 7 хуçалăха выльăх-чĕрлĕх туянтарса, 24 хуçалăхăн çуртйĕрĕсене юсаса пулăшнă.

Ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе пирĕн малашне те тăрăшса ĕçлемелле, ку ĕçе чылай вăйлатмалла.

К. МЕДЯНИН.
Шăхасан райисполкомĕн председателĕ.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстермелле

ЙĔПРЕÇ. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе районра ĕç начар пырать. Çакă вăл ял Совечĕсем хăйсен ĕçĕнче вырăнти активпа çителĕксĕр çыхăнса ĕçленинчен килет. Чылай ял Совечĕсенчи активистсем, укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнас вырăнне, ĕçе хăйсем чăрмантарса пыраççĕ. Акă, Энтриел ял Советĕнчи активистсем паянхи куна государствăна 32.506 тенкĕ парса татман. Вăл шутран ял Советри «МОПР» колхоз председателĕ П. Федоров 1.070 тенкĕ, ферма заведующийĕ И. Коннов 1.559 тенкĕ, вулав çурчĕн заведующийĕ В. Прокопьев 1.131 тенкĕ парса татман.

Кĕлĕмкасси ял Советĕнчи активистсен государствăна 30.000 тенкĕ тĕрлĕ парăмсем тӳлемелле. Пысăк Упакасси, Тури Кĕлĕмкасси, Пучинке ял Совечĕсенчи активистсем те укçа-тенкĕ пухас ĕçе пачах та хутшăнмаççĕ. Районăн укçа-тенкĕ пухас ĕçе хăвăртлатмалла, ку тĕлĕшпе ялти актива ĕçе ытларах явăçтармалла.

П. КУРАКОВ.

ЧĂВАШ БОЕЦĔСЕМ УЯВА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче те пирĕн чаçра тăтăшах чăваш боецесен драмкружокĕ ĕçлерĕ. Халĕ те вăл лайăх ĕçлет. Ăна красноармеец Носков коммунист ертсе пырать. Кружок членĕсем халь Октябрь уявĕнче лартма Н. Мранькан «Сержант Ванюшин» пьесине хатĕрлеççĕ. Хор кружокĕ «Çамрăксен юрри», «Çапăçу юрри», «Шурă роза», «Савни юрри», «Хĕрлĕ Çарти туссене», «Пограничник» юрăсене юрлама вĕренет. Дмитриев, Григорьев тата Иванов юлташсем Эльгер, Эсхель, Уйăп Мишши, Малгай поэтсен сăввисене каласа пама вĕренеççĕ.

Красноармеец Д. ВЕРШКОВ.

ÇАМРĂКСЕМ ВĂХĂТА КУЛЬТУРĂЛЛĂ ИРТТЕРЕÇÇĔ

СĔНТĔР. Шашкарти «Крестьянская газета» колхоз çамрăкĕсем кăçсерен улаха пухăнса алĕç тунипе пĕрлех вăхăта культурăллă ирттереççĕ. Учительница М. Яковлева юлташ улах хĕрĕсене художествăллă произведенисем вуласа парать. Иртнĕ кăçсенче вăл Н. Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романне вуласа пачĕ. Хĕрачасемпе улах каччисем ăна пĕр шавламасăр тимлĕн итлесе ларчĕç.

Вуласа пĕтерсен çак произведени хăйсен кăмăлне кайни çинчен кала-кала пачĕç, малашне татах çавăн пек паха кĕнекесем вуласси çинчен калаçрĕç.

Кунсăр пуçне Яковлева юлташ улахра Отечественнăй аслă вăрçă çинчен калаçу ирттерчĕ. Халĕ колхоз çамрăкĕсем, Аслă Октябрь уявне хатĕрленнĕ май, çĕнĕ юрăсем юрлама вĕренеççĕ.

ГОССТРАХРАН 71.000 ТЕНКĔ ИЛНĔ

Октябрьски районри Сталин ячĕпе тăракан колхоз кашни çулах уйри тырпула акнă хыççăнах страхласа хăварать. Кăçал çак колхоз çанталăк сиенленĕ тырпулшăн Госстрахран 71.000 тенкĕ страховка укçи илчĕ.

КОЛХОЗ ХОРĔ

Октябрьски районри «Комбинат» колхозра 28 çамрăк пĕрлешсе хор кружокĕ организациленĕ. Хора шкул директорĕ Я. Хлебников юлташ ертсе пырать. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кружок икĕ концерт тата «Ирхи çисĕм» ятлă спектакль лартса панă. Кунсăр пуçне, Кутузов полководец ячĕпе вечер туса ирттернĕ, хăйсен землякне гварди старшинине Д. Матвеев летчик-орденоносеца, Хĕрлĕ Çартан курма килнĕскере, чаплă вечер туса ăсатнă.

ДРАМКРУЖОКСЕМПЕ ХОР КРУЖОКĔСЕНЕ ЕРТСЕ ПЫРАКАНСЕН ПĔЛĔВĔСЕНЕ ХĂПАРТМА

Халăх творчествин çурчĕ вырăнсенчи драмкружоксемпе хор кружокĕсене ертсе пыракансен пĕлĕвĕсене хăпартас шутпа ноябрь уйăхĕнче пĕр уйăхлăх курс туса ирттерет. Курсра 60 çын таран пулмалла. Унта вĕрентекенĕсем—Академи театрĕн режиссерĕсемпе артисчĕсем, музыка училищинчи преподавательсем, уйрăм музыкантсемпе композиторсем пулаççĕ.

ЫТТИ РЕСПУБЛИКĂСЕМПЕ ОБЛАÇСЕНЕ ЧĂВАШЛА КĔНЕКЕСЕМ ЯРАÇÇĔ

Тутар, Пушкăрт республикисенче, Куйбышев, Ульяновск тата ытти облаçсенче те пурăнакан чăвашсем патне Отечественнăй вăрçă çулĕсенче чăвашла кĕнекесем пит те çителĕксĕр янă. Хальхи вăхăтра «Союзпечатĕн» чăваш каптурĕ унта чăвашла учебниксемпе ытти йышши литература ярса тăма тытăнчĕ. Малашне Чăвашгосиздат кăларакан кĕнекесене 10—15 процент ытти республикăсемпе облаçсене ярса тăмалла тунă.

„БОЛЬШЕВИК“ КОЛХОЗ ЯЛХУÇАЛĂХ ÇУЛНЕ ĂНĂÇЛĂН ВĔÇЛЕРĔ

Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз кăçалхи çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ, паха вăрлăх акрĕ, агротехникăна пурнăçласа пычĕ.

Суракиччен малтанах бригадăсемпе звеносем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухнă, вĕсем вăтам шутпа гектартан 12 центнертан кая мар тĕштырă туса илес задача лартнă. Çак задачăна пурнăçлассишĕн «Большевик» колхоз хăйпе юнашарти «Партизан» колхозпа ăмăртса ĕçленĕ. Çĕнтерӳ тырпулĕшĕн колхозра вăйлă кĕрешӳ пуçланса кайнă, кĕрешӳ кунран-кунах сарăлса пынă.

Колхозăн çуртыррисем питĕ тикĕс шăтнă. Сĕлĕ те, тулă та, урпа та, ытти тырăсем те ытарма çук вăйлăн ешĕрсе ӳснĕ. Уйри хӳхĕм тырпул колхозниксемпе колхозницăсене хаваслантарнă.

Суракинче хĕрсе ĕçленĕ кунсенче колхоза пирĕн çĕршыв фашистла Германие çĕнтерни çинчен ырă хыпар çитнĕ. Колхоз уйхирĕнче митингсем пулса иртнĕ.

Паллах, ĕмĕр манми çак пысăк та ырă хыпар колхозниксемпе колхозницăсен ĕç хаваслăхне çĕклентермесĕр тăма пултарайман. Уйри тырпула 3—4-шар хут çумласа, çумкурăкĕсенчен тасатнă. Çынсем пысăк савăнăçпа утă çулма тухнă. Улăх уттине 5—6 кунра çулса пухса кĕртнĕ, выльăхсем валли паха утă пухса хунă.

Тырпул пухса кĕртес вăхăт та çитнĕ. Çак ĕçе лайăхрах ирттерес тесе, кашни бригадăрах партипе правительствăн 1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленине сӳтсе-явнă, колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса панă. Тырă вырнă вăхăтрах транспорт инвентарĕсене лартмалли сарай, пĕр тырă склачĕ, икĕ çăл, икĕ авăн çĕнĕрен туса лартнă, çил арманне юсанă.

Тырпул пухса кĕртме тытăнсанах колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй тата ача яслийĕ ĕçлеме пуçланă, вĕсем уйхир ĕçĕсем пĕтиччен йĕркеллĕн ĕçлесе пынă.

Ĕçре мала тухакан бригада валли колхоз правленийĕ куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав тунă.

Тырпул пухса кĕртме ватти-вĕттипех тухнă. Ĕçе пĕтĕмпех уйрăм сдельщинăпа туса пынă. Çĕрĕн-кунĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, колхозниксемпе колхозницăсем нумайĕшĕ кулленхи нормăна 150—200-шер процент тултарнă.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре 65 çулхи И. Волков юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада тата комсомолка М. Степанова ертсе пыракан 3-мĕш бригада малта пулнă. Ку бригадăсем тырра хăвăрт тата таса вырнă. Вĕсем куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава илме пултарнă. Çав хушăрах Х. Иванщикова ертсе пыракан 2-мĕш бригада юлса пынă. Ăна малти бригадăсем çуртри вырма пулăшнă.

Колхоз активĕ уйхир ĕçĕ вăхăтĕнче массăллă-ăнлантарулла ĕçе ытти чухнехинчен анлăрах туса пынă. Колхоз счетовочĕ комсомолка Р. Тишанова кулленех хире тухса тырă выракансене нормăна кам мĕн чухлĕ тултарса пынине, кам мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине каласа панă. Ялти коммунистсем Ф. Скворцов тата Я. Спиридонова тĕнчери лару-тăрупа паллаштарсах тăнă.

Колхозри стена хаçачĕн редколлегийĕ (редакторĕ С. Пайманов) «Çулăм» ятлă стена хаçатне 42 номер кăларнă, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра стена хаçатне 3 кунта пĕрре кăларса тăнă.

Колхозра хисеп тата кăтарту хăмипе анлăн усă курнă. Малта пыракансене унта çырсах тăнă. Колхозри çамрăксем тырпул вырса пухнă вăхăтра пĕр спектакль лартса панă, ташă-вăйăсемпе 12 вечер туса ирттернĕ. Агитаторсем 8 доклад тата 27 калаçу ирттернĕ. Колхозниксем 3 кинокартина курнă тата пĕр хут Чăваш филармонийĕн артисчĕсен концертне итленĕ.

Ыраш акине колхоз хăвăрт та лайăх ирттернĕ. Кĕртыррин 70 процентне Е. Елаховпа К. Пушкина колхозниксем машинăпа акса хăварнă. Ыраш калчисем юр айне лайăх юлчĕç.

Колхозниксем тăрăшса ĕçленĕ май, колхоз ыраша 6 кунта, çуртыррине 9 кунта пĕр тăкаксăр вырса пĕтернĕ, ытти ĕçсене те манăçа хăварман.

Ыраш вырма тухсанах колхозниксемпе колхозницăсем аван çапса государствăна тырă парас ĕçе тимлĕн туса пынă. Кĕлте турттарнă çĕрте тата ытти ĕçсенче те лашасемсĕр пуçне 5 вăкăрпа ĕçленĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, государствăна тырпул парса татассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, сентябрь уйăхĕнчех 1945 çулшăн государствăна тырă парса татнă.

Колхоз кăçал тухăçлă тырпул туса илнĕ. Колхоз хуçалăхĕнче чи кирли—вăрлăх. Çавăнпа та вăрлăх участокĕсем çинчи тырпула уйрăмах тимлĕн пăхса ӳстернĕ. Вăрлăх хуçалăхне кунта опытлă колхозник—правлени членĕ С. Волков юлташ ертсе пынă. Вăрлăх участокĕнчен вара вăтам шутпа кашни гектартан 14 центнер тĕштырă туса илнĕ. Çĕрулми гектартан 700 пăт ытла тухнă. 1946 çулта колхоз пĕтĕмпех сортлă вăрлăх акма тытăнать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те колхозра ĕç ăнăçлăн пырать. Плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Темиçе çул хушши сысна пăхас ĕçре ĕçлекен Анна тата Ольга Григорьевăсем 1945 çулта пĕр ама пуçне 16-шар сысна çури илсе пăхса ӳстернĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене колхоз государствăна парса татнă. Килес çулшăн 6 центнер аш-какай панă. Халĕ татах та 7 сысна государствăна пама самăртса хатĕрленĕ.

Фермăсен заведующийĕ Отечественнăй вăрçă инваличĕ А. Смирнов тăрăшса ĕçленипе выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Силос хывмалли плана 115 процент тултарнă. Витесене тĕплĕн юсаса ăшăтса хатĕрленĕ. Ама выльăхсене пурне те чуптарса хăварнă. 1945 çулта колхоз лаша ферми организациленĕ. Ăна «Отличник социалистического сельского хозяйства» ятлă значок илнĕ Н. Пайманов ертсе пырать. Кăçал вăл тихасене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстернĕ, кĕсресене чуптарса хăварнă.

Кăçалхи ялхуçалăх çулне вĕçлес ĕçе колхозниксемпе колхозницăсем килес çул вăйлă тырпул туса илессипе таччăн çыхăнтарса пыраççĕ. Кĕрхи çĕртме планне 122 процент пурнăçланă. Çĕртме сухинче Ф. Иванова, А. Каменева, Л. Никифоров сухаçăсем тăрăшса ĕçленĕ. Колхоз аван çапас ĕçе те вĕçлерĕ. Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнине колхоз пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет.

Колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçлени ахаль пулмарĕ. Вĕсем кашни ĕçкунĕ пуçне 2,5 килограмм тĕштырă, укçа тата тĕрлĕ çимĕçсем валеçме шутлаççĕ.

Вас. ЧИГАРКИН.

ТАСС хирĕçлесе калани

Лондонра тухса тăракан «Ньюс кроникл», «Дейли мейл» хаçатсем тата ыттисем те Америкăри Ассошиэйтед Пресс агентствин пĕлтерĕвне пичетленĕ. Çав пĕлтерӳре каланă тăрăх, совет çарĕсем юлашки кунсенче Болгарипе Турци чикки тăрăх пысăк маневрсем тунă пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çавăн пек пĕлтерни—шухăшласа кăларнă хыпар, ун пекки нимĕн те пулман.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ÇАМРĂКСЕН КОНФЕРЕНЦИНЕ ПУХАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕТĂН ЛАРĂВĔНЧЕ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 21-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Китайри, Кăнтăр Америкăри, Данири, Кубăри, Спанри тата ытти çĕршывсенчи çамрăксен делегацийĕсем çинчен сӳтсе-явнă. Çакна палăртнă: Греци çамрăкĕсен делегацийĕ ЭПОН (Грецири çамрăксен патриотла организацийĕ) конференцие тухса кайма ирĕк паракан хута илмен-ха, мĕншĕн тесен Греци правительстви 17 çулпа 35 çул хушшинчи çамрăксене Грецирен ют çĕршывсене кайма ирĕк парас ĕçе питĕ хĕснĕ.

Комитет çав ларура пĕтĕм тĕнчери конференцие епле ирттерес ыйтăва тĕплĕн пăхса тухнă. Конференци Октябрĕн 29-мĕшĕнче чаплă ларупа уçăлмалла. Вăл лару Альбертхоллра пулмалла. Октябрĕн 31-мĕшĕнче вара конференцин пĕрремĕш ĕçлĕ ларăвĕ пулса иртмелле. Çав кун Англипе, Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Китай, Франци тата Югослави делегацийĕсен доклачĕсене итлемелле. Вăл докладсем çамрăксем ирĕклĕхпе миршĕн епле кĕрешнине кăтартса памалла.

Конференцире акăлчан, вырăс, француз, китай тата испани чĕлхисем официальнăй чĕлхесем пулмалла тесе йышăннă.

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет уйрăм комисси суйланă. Çав комисси пĕтĕм тĕнчери çамрăксем ирĕклĕхпе çирĕп миршĕн епле кĕрешнине кăтартакан выставка организацилемелле, вăл выставкăна конференци вăхăтĕнче уçмалла.

КИТАЙ УЧЕНĂЙĔ СОВЕТ НАУКИ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОКЛАД

ЧУНЦИН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Синьминьбао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, естественнăй наукăсене вĕренекен пĕтĕм Китайри обществăн çуллен пулса иртекен конференцийĕнче СССР Наука академийĕн юбилейлĕ сессине килсе кайнă паллă физик Тин Ся-линь «Совет Союзĕнчи наука» ятлă доклад туса панă.

«Совет Союзĕ,—тенĕ Тин Ся-линь,—наукăна йĕркеллĕн аталантарса пыракан пĕртен-пĕр çĕршыв пулса тăрать. Совет Союзĕнчи тĕпчев институчĕсен хисепĕ Совет Союзĕнче естественнăй наукăсем çине тимлĕн çаврăнса пăхнине тата совет халăхĕ наукăсемпе питĕ интересленнине кăтартса парать».

Малалла Тин Ся-линь Совет правительстви ученăйсемшĕн мĕнле тăрăшни çинчен каласа панă. Юлашкинчен вăл Китай ученăйĕсен совет ученăйĕсемпе таччăнрах çыхăнма кирлине кăтартса панă.

ВАРШАВĂРА «МУСКАВ—СССР СТОЛИЦИ» ЯТЛĂ ВЫСТАВКА УÇĂЛНĂ

ВАРШАВА, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин çĕнĕ çуртĕнче «Мускав — СССР столици» ятлă пысăк фотовыставка уçăлнă. Выставкăна уçнă çĕре Польша Халăх Совечĕн вице-президенчĕ Швальбе, премьер-министр Осубка-Моравский, правительство членĕсем, дипломати корпусĕн представителĕсем, çавăн пекех тата общество деятелĕсем, наукăпа искусство работникĕсем тата ыттисем те пынă.

Общество председателĕ юстици министрĕ Свентковский пысăк сăмах тухса каланă.

«Çак выставкăна уçса, эпир Польшăна Мускав çинчен тĕрĕссине кăтартма тăрăшатпăр, поляксен реакцилле шайки халăхран пытарса пурăннине хамăр землякесене каласа пама тăрăшатпăр,—тенĕ вăл.—Эпир вырăс халăхĕн чапне, хăватне тата пахалăхне кăтартса парасшăн, çав халăх хăрушă вăрçă вăхăтĕнче Гитлерăн тискер машинине çапса аркатнă чул ту пулса тăчĕ».

Выставкăна уçнă çĕрте çавăн пекех тата Совет Союзĕн Польшăри посолĕ Лебедев тата Варшава президенчĕ Толвинский сăмах тухса каланă.

ГРЕЦИРИ ХĔРАРĂМСЕН СОЮЗĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

АФИНЫ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Грецири ăслăлăхра ĕçлекен хĕрарăмсен союзĕ Англи королеви патне, çавăн пекех тата Англири, Совет Союзĕнчи, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Францири тата Китайри чи паллă деятельсен арăмĕсем патне çыру янă. Союз çав çырура Греци тĕрмисене хупса лартнă 400 хĕрарăма çăлса хăварма ыйтать. Тĕрмене хупса лартнă хĕрарăмсен шутĕнче—работницăсем, студенткăсем, учительницăсем, килхуçи хĕрарăмĕсем тата шкулсенче вĕренекен çамрăк хĕрачасем те пур. Çырура çапла каланă: çав хĕрарăмсем пурте союзниксен пĕтĕмĕшле ĕçĕшĕн тата Грецие ирĕке кăларассишĕн паттăррăн çапăçнă, тенĕ.

Çырура юлашкинчен çапла каланă: Грецири хĕрарăмсен ячĕпе тата Грецири пĕтĕм демократилле халăх ячĕпе эпир сире тата союзлă çĕршывсенчи мĕнпур хĕрарăмсене те çав çынсене пурнĕ те кăларма ыйтма чĕнетпĕр, çапла вара Грецин чи шанчăклă хĕрĕсене вăраххăн вилесрен тата тискеррĕн асаплантарасран çăлса хăварма ыйтатпăр, тенĕ.

ЮГОСЛАВИРИ СУЙЛАВСЕМ УМĔН

БЕЛГРАД, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 21-мĕшĕнче Сараево хулинче халăх фрончĕн суйлав умĕнхи пысăк митингĕ пулса иртнĕ. Çав митингра 80.000 çынна яхăн пулнă. Митингра Боснипе Герцеговина халăх скупщинин председателĕ Воислав Кришманович, Югославин вăрман хуçалăх министрĕ Сулейман Филиппович тата Боснипе Герцеговинăн халăх правительстви пуçлăхĕ Радолюб Чолакович сăмах тухса каланă.

— Çитес суйлавра пирĕн чееленмелли çук,—тенĕ Радолюб Чолакович, —эпир хамăр мĕншĕн кĕрешнине тата мĕн çĕнтерсе илнине çеç çирĕплетсе хурăпăр. Эпир демократилле çĕнĕ йĕрке турăмăр тата хамăр çĕршыва йăлтах урăхла сăн-сăпатлă туса хутăмăр. Акă мĕншĕн ĕнтĕ вăл çĕршыв халь пуриншĕн те пĕр пекех хаклă: сербшăн та, хорватшăн та, словенецшăн та, черногорецшăн та, македонецшăн та,—мĕншĕн тесен вăл пуриншĕн те анне вырăнне пулса тăрать. Пирĕн хальхи демократилле йĕркере власть халăх аллинче тăрать. Анчах пирĕн хамăр пурнăç çине шалти политика енчен çеç пăхмалла мар. Тĕнчере эпир пĕччен мар, пирĕн туссем те, тăшмансем те чылаях. Пирĕн задача çакă: этемлĕхĕн ырă кунçулне сыхласа хăвармашкăн, пĕтĕм тĕнчипе мир тумашкăн пирĕн союзниксемпе туссем ытларах тупма тăрăшмалла. Мир нумай ăрушăн сыхланса юлтăр тесе тăрăшатпăр эпир. Çавăнпа та эпир пирĕн никама пăхăнманлăха хисеплекенсемпе пуринпе те мирлĕн те туслăн пурăнма тăрăшатпăр. Эпир питĕ хăватлă союзниксем тупрăмăр, вĕсем пуринчен ытла—тăванла славян çĕршывĕсем. Кунта чи малтан тăванла аслă Совет Союзне аса илмелле. Совет Союзĕпе эпир туслăх, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен договор турăмăр. Çав договор вăл ирĕклĕ мĕнпур халăхсен пухăш-кăмăлне палăртса тăрать. Çав договора алă пуснипе пире малашне пĕр чăрмавсăр аталанса пыма май парать тесе шутлатпăр эпир.

АНГЛИН ТИНĔС-ÇАР ФЛОТĔНЧЕ ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧЕ ПУЛНĂ ÇУХАТУСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Англин тинĕс министрĕ Александер сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Англи тинĕс-çар флочĕн çак иртнĕ вăрçăра мĕн пурĕ 730 карап пĕтнĕ, 50.000 офицерпа матрос вилнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă.

КĔСКЕН

* Греци регенчĕ Дамаскинос архиепископ премьер-министр ĕçĕсене хăй туса пыма пуçланă.

* Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешнĕ нацисен уставне çирĕплетнине кăтартакан документсене 23 çĕршывăн правительстви панă ĕнтĕ, тенĕ.

ФРАНЦИРИ СУЙЛАВĂН МАЛТАНХИ РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ПАРИЖ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй даннăйсем тăрăх, Францире хăйĕнче тата унăн тинĕссем урлă выртакан çĕрĕсенче суйланă 581 депутат çинчен сведенисем илнĕ. Çав депутатсем парти тĕлĕшпе çапла пайланса тăраççĕ: коммунистсем—151 депутат, «Республикăшăн тăракан халăх юхăмĕн» представителĕсем—142 депутат, социалистсем—139, чи сылтăмрисем—40, независимăйсем—40, радикалсем—19 депутат.

ПАРИЖ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй даннăйсем тăрăх, октябрĕн 21-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлавра коммунистсен партийĕн кандидачĕсемшĕн 4.556.000 суйлавçă сасăланă, социалистсен партийĕ тăратнă кандидатсемшĕн 4.488.000 суйлавçă, «Республикăшăн тăракан халăх юхăмĕ» ятлă парти тăратнă кандидатсемшĕн 4.032.000 суйлавçă сасăланă.

АРГЕНТИНА ПРАВИТЕЛЬСТВИНЧЕ ÇЫНСЕНЕ ВЫРĂНА ЛАРТНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина президенчĕ Фаррель Писсарини генерала вице-президент пулма лартнă. 1937 çулта, Писсарини Аргентинăн Берлинри çар атташи пулса ĕçленĕ вăхăтра, Гитлер ăна Германи ăмăрткайăкĕн орденĕ ятлă орденпа наградăланă.

Писсарини нимĕç çарĕнче 1909 çултан пуçласа 1911 çулччен тăнă. 1923 çулта хĕçпăшал илме Германие кайса килнĕ, 1937—1938 çулсенче Берлинра çар атташи пулса ĕçленĕ. 1941 çулта вăл Аргентинăри техника обществине çапла каланă: сире «авторитарнăй» (урăхла каласан—фашистла) организаци кирлĕ, тенĕ.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах Фаррель правительствăна Перон майлă ĕçлекен 4 çынна кĕртнĕ.

ПЕРОН ГИТЛЕРОВЕЦСЕМПЕ ÇЫХĂНСА ТĂНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат çапла пĕлтерет: «Демократие хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен пĕтĕм Америкăри совет» çак кунсенче пресс-конференци тунă. Çав пресс-конференцире икĕ паллă аргентинец (тăшмана хирĕç пыракан юхăмăн пуçлăхĕсем) сăмах тухса каланă. Вĕсем çапла каланă: Перон хальхи вăхăтра, паллах, Германи фашисчĕсемпе качашлать, тенĕ. Перон канма Патагонири Чубут провинцине кайнă тесе Буэнос-Айресран официальнăй йĕркепе пĕлтерни çинчен çав çынсем çапла каланă: Германи помещикĕсен Патагонире питĕ пысăк именисем пур, унта паллă гитлеровецсем пытанса пурăнаççĕ, вĕсем унта питĕ нумай укçа илсе пынă, тенĕ.

Çав аргентинецсем хăйсен хушаматĕсене пĕлтерме хушман, мĕншĕн тесен вĕсен çемьисем Аргентинăра пурăнаççĕ. Вĕсем çапла каланă: Перон Аргентинăра влаçа хăйĕн аллине çавăрса илнĕренпе унăн çарĕ виçĕ хут ӳссе кайнă, Буэнос-Айресри полицин хисепĕ 10.000 çынтан 30.000 çынна çитиччен ӳснĕ.

Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Рио-де-Жанейро хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, «Ла критика» хаçат кăларса тăракан Таборда çапла каланă: Перон вăл Аргентинăн кăнтăр пайне гитлеровецсен пуçлăхĕсемпе канашлама тата секретлă хĕçпăшал тăвас ĕçри çитĕнӳсемпе паллашма кайнă пулмалла, тенĕ.

ВЕНЕЦУЭЛĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США-н государство департаменчĕ Венецуэлăра восстани пуçланни çинчен хыпар илнĕ. Восстани тăвакан çарсем Медина президентăн резиденцине тытса илнĕ.

Америкăн Венецуэлăри посолĕ Корриган пĕлтернĕ тăрăх, восстани октябрĕн 18-мĕшĕнче пуçланнă. Тепĕр 5 сехетрен восстани тăвакансем президент резиденцине, ун çывăхĕнчи çар академине тытса илнĕ. Медина президент правительство çарĕсене ертсе пырас ĕçе хăй çине илнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, восстани тăвакансем пĕтĕм çĕршыва хăйсен аллине тытса илнĕ.

Медина гражданла гвардин шанчăклă пĕчĕк ушкăнĕпе çĕршыв ăшне шалалла тарнă.

Урăх тĕрлĕ хыпарсем тăрăх, Мединăпа унăн правительствин хăшпĕр членĕсене тыткăна илнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тарасасем юсакан завода Шупашкарти, Канашри, Улатăрти, Етĕрнери, Çĕмĕрлери тата Чкаловскри тарасасем юсакан мастерскойсенче ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: слесарьсем, тараса мастерĕсем, жестянщиксем, лудильщиксем тата хуралçăсем. Çав ĕçсене вĕренекен учениксене те илеççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автотранспорт управленине экономист, статистик тата охранник кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Союзная. 4. Телефон 3—13.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00435